Муркаш округĕн территори пайĕсен ĕçĕ-хĕлĕ

# Москакасси территори пайĕ

## *Ахмане, Ивановка, Калмăккасси, Вăрманкас Хачăк, Макçикасси, Москакасси, Мăрсакасси, Анаткас Хачăк, Петровка выççăлкки, Пожедановка, Уйкас Хачăк, Рыккакасси, Хачăк Сали, Çĕлеменкасси, Ситуккасси, Эхветкасси ялĕсем*

# Шывпа тивĕçтерес ыйтăва татса парсан, çул-йĕр юсассипе ытларах ĕçлĕç



Москакассинче шыв пăрăхĕ хураççĕ.



Такăр çулпа çӳреме меллĕ пулĕ.



Картиш территорине юсассипе ĕçсем кал-кал пыраççĕ.



Москакассинчи ача сачĕн никĕсне хывнă.

Москакасси территори пайне ĕçре пысăк ăсталăх пухнă Денис Валерьевич Кириллов ертсе пырать. Ку тăрăх пĕчĕк мар, 16 ялта 2600 çын пурăнать. Нумай ачаллă çемьесем 50, вĕсенче 158 ача пурăнать, 1 çемьере – çул çитмен 6 ача. 97 çемьене тӳлевсĕр çĕр лаптăкĕ илмеллисен учетне илнĕ. Çамрăк 2 çемье «Обеспечение жильем молодых семей» патшалăх программипе пурăнмалли çурт-йĕр условине лайăхлатнă. Иртнĕ çул территоринче 20 ача çуралнă, 28 çын вилнĕ, 8 мăшăр çемье çавăрнă, çавăн чухлĕ çемье арканнă.

Территоринче пĕчĕк тата вăтам бизнес сфери япăх мар аталаннă, вăл шутра пысăк объектсем: «Сеспель» предприяти, 3 автозаправка тата ыттисем ĕçлеççĕ.

***– Денис Валерьевич, Москакасси территорийĕ географи тĕлĕшĕнчен меллĕ те илемлĕ тăрăхра вырнаçнă, çакă çынсене ĕç вырăнĕсем тупас тĕлĕшпе те вырăнлă. Сирĕн территоринче çулсеренех пысăк калăпăшлă ĕçсем пулса пыраççĕ. Иртнĕ çул ку енĕпе ĕçсем еплерех пулчĕç?***

– Çапла, çулсеренех эпир тĕрлĕ программăна хутшăнса çынсен пурнăç условине лайăхлатассишĕн, вырăнти пурнăçа хăтлăрах тăвассишĕн тăрăшатпăр. Иртнĕ çул та эпир пуçарулăх бюджечĕпе япăх мар ĕçлерĕмĕр. Москакасси ялĕнче пурăнакансене ĕçмелли пахалăхлă шывпа тивĕçтерме май килчĕ. Çак ĕç валли пĕтĕмпе 5500011 тенкĕ тăкакларăмăр.

Рыккакассинче çĕнĕ клуб хута кайни – пысăк калăпăшлă ĕç шутĕнче. Ăна та пуçарулăх бюджечĕн программипе тума май килчĕ. Подрядчикĕ «Стройстандарт» чикĕллĕ яваплăхлă общество пулчĕ. Проектпа пăхнă тăрăх, объектри ĕçсем 6 миллион тенкĕне яхăн пулчĕç. Ял çыннисем 1 миллион та 137 пин тенкĕ пухма пултарчĕç. Сентябрĕн 18-мĕшĕнче округ администрацийĕ подрядчикпа килĕшӳ тунă, виçĕ уйăх ытларах вăхăтра строительсем капмар çурт çĕклесе те лартрĕç.

Декабрĕн 27-мĕшĕнче çĕнĕ клуб хĕрлĕ хăю касса савăнăçлă лару-тăрура уçрăмăр. Вырăнти çынсемшĕн çакă Çĕнĕ çул парни пулчĕ. Ял çыннисен пуçарулăхне пурнăçа кĕртме вырăнти «Бездна» чикĕллĕ яваплăхлă общество пысăк пулăшу кӳчĕ. Республика Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Угаслов та клуб тăвас ĕçе хăйĕн тӳпине хыврĕ. Çак ĕç пуçарулăх ушкăнĕн ертӳçи Вера Акимова пуçарнипе пулчĕ, вăл вырăнти культура вучахне чĕртсе тăратас ĕçе пысăк тӳпе хыврĕ.

***– Çул-йĕр фончĕн укçипе усă курса территоринче мĕнле ĕçсем тума май килчĕ?***

– Москакасси ялĕ тĕпрен çĕнелсе пырать. Çул-йĕр фончĕн укçипе усă курса иртнĕ çул çак ялти Зеленая урамри нумай хваттерлĕ 1-мĕш çурт картиш территорине 1158065 тенкĕлĕх юсав ирттертĕмĕр. Çакăн пек ĕçсене 3А çурт патĕнче те турăмăр. Ку ĕç валли 562586 тенкĕ расхутларăмăр. Юсав ĕçĕсене И. Шишкин предприниматель пурнăçларĕ.

Уйкас Хачăк ялĕнчи 39-мĕш çуртран пуçласа 60-мĕш çурт таран çул юсарăмăр. Ку ĕç валли 1321165 тенкĕ тăкакларăмăр. Ĕç пурнăçлаканĕ «Стройком» чикĕллĕ яваплăхлă организаци пулчĕ.

***– Шыв башнисем юсаса çĕнетессипе мĕнле ĕçлерĕр иртнĕ çул?***

– Ку енĕпе те эпир япăх мар ĕçлерĕмĕр иртнĕ çул. Эхветкасси, Москакасси, Ситуккасси, Мăрсакасси ялĕсенче шыв башнисен насусĕсене улăштартăмăр.

***– Кăçал пурнăçлама палăртнă ĕç те сахал мар пулĕ сирĕн?***

– Кăçалхи плансем те пысăк пирĕн. Пуçарулăх бюджечĕн программипе усă курса Ахмане ялĕнчи шывпа тивĕçтермелли системăна улăштарса çĕнетмелле. Ĕç хакĕ – 505764 тенкĕ. Ял çыннисенчен 50576 тенкĕ пухнă. Муниципалитет округ бюджетĕнчен – 151729 тенкĕ, ытти пайĕ – 303458 тенкĕ – республика бюджетĕнчен.

Çак ялтах Андрей Петтоки, Зеленая, Северная, Южная урамсенче çул-йĕр юсама палăртатпăр. Пĕтĕмĕшле ĕç хакĕ – 3999355 тенкĕ, çакăн 10 процентне ял çыннисенчен пухнă, округ бюджетĕнчен – 151729 тенкĕ, республика бюджетĕнчен – 2399613 тенкĕ.

Çĕлеменкассинчи Тĕп урамра пурăнакан çынсем çул юсаса хăтлăх кĕртесшĕн. Пĕтĕмĕшле ĕç хакĕ 1411850 тенкĕ, пысăк пайĕ республика бюджетĕнчен – 847110 тенкĕ, округ бюджетĕнчен – 423555 тенкĕ.

Анаткас Хачăкра та шыв системине улăштармалла. Проект хакĕ пысăк, 4325812 тенкĕ, республика тӳпи çак ĕçре 2595487 тенкĕ.

Мăрсакассинче пурăнакансене те ĕçмелли пахалăхлă шывпа тивĕçтерессине лайăхлатмалла, шыв парса тăракан системăна юсамалла. Проект хакĕ – 2530492 тенкĕ, 253049 тенкĕ – вырăнти çынсенчен, çак ĕçе округ 759147 тенкĕ хывать, пысăк пайĕ республикăран – 1518295 тенкĕ.

Мăрсакассинчи шыв системине юсаса пĕтернĕ хыççăн территори пайĕнчи мĕнпур ялта çĕнĕ шыв башнисемпе шыв пăрăхĕсен линийĕсем çĕнелсе çитеççĕ. Вырăнта шывпа тивĕçтерес ыйтăва татса парсан малашне ялсенчи çул-йĕре юсассипе ĕçлеме тытăнăпăр. Ку ыйтăва та çитес вăхăтра пирĕн татса памалла.

***– Çул-йĕр фончĕн укçипе усă курса мĕнле ĕçсем тăвасшăн?***

– Ку укçапа эпир кăçал икĕ ял çулне юсама палăртатпăр. Пĕри – Уйкас Хачăкра, 21-мĕш çуртран пуçласа 7-мĕш çурт таран çул юсамалла. Проект хакĕ – 311 пин те 330 тенкĕ. Москакассинчи Московская урамри ĕç хакĕ пысăкрах – 736 пин те 625 тенкĕ. Унта 35-мĕш çуртран пуçласа 41 А çурт таран çул юсамалла.

***– Сирĕн территоринче тахçантанпа тăракан çивĕч ыйту вăл – «Колокольчик» ача садне тăвасси. Тинех ку объекта тума пуçăнчĕç пулас.***

– Çапла, москакассисем ача сачĕ хута каясса питĕ кĕтеççĕ. Ача сачĕ ĕçлеме пуçлани çамрăксене яла илĕртессе, çĕнĕ объект пирĕн территорин социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне лайăхлатма пулăшасса шанас килет. Çак объекта тума ырланăшăн регион ертӳçине Олег Николаева тата Муркаш муниципалитет округĕн пуçлăхне Алексей Матросова тав сăмахĕ калатпăр.

Шкулчченхи вĕренӳ учрежденин проект хакĕ 235 миллион тенкĕпе танлашать. Ăна пĕтĕмпех республика бюджетĕнчен уйăрма палăртнă. Кивĕ çурта январьте сӳтме тытăнчĕç. Çак вăхăт тĕлне никĕсне хатĕрлесе çитерне. Ача сачĕ 160 ача вырнаçмалăх пулĕ. Çул ӳсĕмне кура чи кĕçĕннисенчен пуçласа шкула каяс умĕнхи ушкăнсем пурте ĕçлĕç. Пирĕн территоринче хăтлă та илемлĕ объект проектпа палăртнă вăхăтра хута каясса шанатпăр. Ку вăл пуриншĕн те пысăк савăнăç пулĕ.

Ача садне туса пĕтерсен Москакасси ялĕнчи Зеленая тата Молодежная урамсенчи çула юсама палăртатпăр. Мĕншĕн-ха çак ĕçе эпир хыçа хăваратпăр? Мĕншĕн тесен ача садне тума пысăк тиевлĕ машинăсем строительство материалĕсем турттарнă чухне çул ванмасăр пулмасть. Ытти ялти çулсене те шыв системине çĕнетнĕ хыççăн юсама палăртатпăр.

Пирĕн тĕп тĕллев – çынсен пурнăç условине хăтлăрах тăвасси. Иртнĕ çул москакассисем япăх мар ĕçленĕ тесе шухăшлатăп. Пĕрле килĕштерсе ĕçленĕшĕн депутатсемпе старостăсене, Москакасси тăрăхĕнче пурăнакансене тав тăватăп. Вĕсем кирек епле лару-тăрура та пĕрле ĕçлеме, пĕр-пĕрне пулăшма хатĕр.

Çавăн пекех пире «Сеспель» предприяти, Вадим Терентьев тата ытти уйрăм предпринимательсем пысăк пулăшу кӳреççĕ. Тавах Муркаш муниципалитет округĕн пуçлăхне Алексей Матросова, экономика пайĕн пуçлăхне Ольга Тимофеевăна, вĕсем те пирĕн ыйтусене яланах пĕрле татса пама хатĕр.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**